ЧР Президенчĕпе иртнĕ тĕл пулуран

# Патшалăх – яла ура çине тăратассишĕн е лайăх пурăнма шикленес марччĕ

Иртнĕ ытлари кун пирĕн районта ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров, ЧР ял хуçалăх министрĕ М.В. Игнатьев пулчĕç. Вĕсем район администрацийĕн ларусен залĕнче Муркаш, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсен, вĕсен ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе тĕл пулчĕç. Тĕпрен илсен, калаçу "АПК аталантарасси" наци проекчĕ тата ЧР Президенчĕ Н.В. Федоровăн ялсене автомобиль çулĕпе çыхăнтарассине хăвăртлатмалли мерăсем çинчен калакан Указĕ епле пурнăçланни пирки пулчĕ.

– "АПК аталантарасси" наци проекчĕ пирĕн республикăра çул тăвас ĕçпе пĕрле харăс пурнăçланать. Çакна валли бюджетран укçатенкĕ нумай уйăрма палăртнă. РФ ял хуçалăх министрĕ А.В. Гордеев пирĕн республикăна килсен, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин бюджетĕнчен çул-йĕр тăвас ĕçе мĕн чухлĕ сумма уйăрма май килнине пăхса тухрăмăр. Ял хуçалăхне тата обществăлла инфраструктурăна аталантарма пурĕ 2007-2008 çулсенче сахалтан та 25 миллиард тенкĕ укçа уйăрма май пур. Ку вăл сахалтан та. Ку цифрăсене малтан ниçта та палăртман. Наци проекчĕ пулман пулсан, çак сумма - çак çăмăллăх пулмасан та пултаратчĕ, – терĕ Николай Васильевич хăйĕн сăмахне пуçланă май. – Çакă вăл йăлтах ялти йывăр лару-тăрăва пĕтерме, яла ура çине тăратма уйăрнă сумма.

Палăртмалла, урăх нихăш регионта та çул-йĕр тума çакнашкал укçа уйăрмаççĕ. Тутарстанра та, Мордва республикинче те.

Юлашки çулсене илес пулсассăн та, АПК аталантарма пур енлĕ усă курасси ӳссех пырать. Виçĕ районĕпе те. Пирĕн районта ял хуçалăхне аталантарма пĕлтĕр виçĕм çулхинчен 35 процент чухлĕ ытларах 109 миллион тенкĕлĕх усă курнă. Кăçал вара "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн вăл ĕçлеме пуçланăранпа кăна çак сумма 9 уйăхра пирĕн районта 210 миллион та 159 пин тенкĕпе танлашрĕ. Республикипе вара ку сумма 3 миллиард та 300 миллион тенкĕпе танлашрĕ.

Президент сăмахĕсем тăрăх çитес çул çак суммăна тата 6 миллиард тенкĕ чухлĕ ӳстерме пур майсем те пур. Ку та РФ ял хуçалăх министрĕпе пĕрле пăхса тухса палăртнă сумма. Ку сумма, Президент палăртнă пек, Шупашкарта юлмасть, йăлтах яла каять: ял хуçалăхне аталантарма. Çавăн пекех ялти çынсене çурт-йĕр çавăрма пулăшма уйăракан сумма та çитес çул палăрмаллах хăпармалла: пур ӳсĕмри çынсене валли те, уйрăмах çамрăксене валли.

Паян ял хуçалăх продукчĕсем туса илекенсем валли те пĕтĕм çул уçă. Кашни ял тăрăхĕнче ял хуçалăх кооперативĕ пулмалла. Патшалăх паян ял хуçалăх кооперативĕсене миллиард тенкĕ парса пулăшать. Уйрăм хушма хуçалăхсене аталантарма кăна (вăл апрельте йĕркеллĕ ĕçлеме пуçланине шута илсе) çур çулта 1,5 миллиард тенкĕлĕх çăмăллатнă кредит илнĕ.

– Патшалăх паракан çак пулăшăва мĕнле илмесĕр тăма пулать. Чăваш Республики валли уйăрнă çав миллиардшар сумма кăçалтепĕр çул пулать-ха çĕршывра. Анчах та унпа усă курмасан, çав сумма пирĕнтех юлать тесе шантарса калама çук, – терĕ Президент.

Хуçалăх ертӳçисем выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилеме нумай вăхăтлăх паракан кредита 10-12 миллион тенкĕлĕх çеç илни те тивĕçтермелли япала мар паян.



– "Россельхозбанк" паян ку тĕллевпе 2-шер, 3-шер миллиард тенкĕ парать. 8 çуллăха паракан çак çăмăллатнă кредита 2 процентне çеç тӳлемелле. Инфляци 11 процентпа танлашнине шута илсен, илнинчен те сахалтарах тавăрса памалла пулать. Мĕншĕн шикленетĕр паракан пулăшăва илме? Николай Васильевич çак сăмахсем хыççăн республикăн кăнтăр районĕнче В.Ф. Ермолаев, çак пулăшупа усă курса, сысна комплексĕ лартакан тĕслĕх çинче, унта ĕçлекенсен ĕç укçи сахалтан та 10 пинрен кая пулмалла марри пирки каларĕ.

– Сирĕн районсенче ăçта çавăн пек çынсем?

ЧР Президенчĕн çак сăмахĕсем тепĕр хут пире мĕн пуррипе пурăнма хăнăхнă йăларан тухма хистет. Хамăр туса илнĕ ял хуçалăх продукчĕсене сутма та пĕлместпĕр тепĕр чух. Именни кăна та мар пуль. Çĕнĕлле пурăнас тесен лăпкăлăхран тухмалла вĕтха пирĕн. Ытларах чупкаламалла. Эпир вара çапла тума хăнăхман-ха. Апла пулсан, ЧР ял хуçалăх министрĕ М.В. Игнатьев тĕл-пулура палăртнă пек, пирĕн хамăрăн психологие улăштармалла. Пурнăç çине çĕнĕлле пăхмалла.

Çакна юлашки эрнесенчи канмалли кунсем те çирĕплетсе пачĕç. Çитĕнтернĕ çĕр улмие, пахча çимĕçе сутма Шупашкарта пирĕн района валли ятарлă тӳлевсĕр вырăнсем уйăрнă пулсан та, çакăн пирки радиопа, хаçатпа пĕлтернĕ, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен вырăнсенче ăнлантарнă пулсан та, сутма пыракансем пирĕн районтан нумайăнах пулман, туса илнĕ продукцие сутма та пĕлместпĕр-ха эпир. Пынисем вара хăйсен çĕр улмине килограмне 3,5-4 тенкĕпе кăнтăрлачченех сутса пĕтереççĕ.

Михаил Васильевич хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртсах каларĕ. Кăçал çĕршывăн 10-12 регионĕнче çĕр улми япăх е пачах та пулман. Çавăнпа та паян çĕр улми пуçтарма килекенсене 3 тенкĕпе парса яни ял ĕçченĕшĕн йăнăш пулĕччĕ. Тепĕр уйăхранах унăн хакĕ татах та хăпарма пултарать.

Министр хăйĕн сăмахĕнче çавăн пекех çакна палăртрĕ. Кăçал вырма тапхăрĕ йĕпесапаллă килесси пирки малтанах пĕлтернĕ пулин те, чылай хуçалăх ертӳçисем ĕçе унпа килĕшӳллĕн йĕркелеменнипе уйри ĕçсем вăраха кайрĕç. Кĕрхи культурăсен тухăçĕ пысăк пулнине пĕлетпĕр пулин те, кĕр тыррисене пĕлтĕрхи чухлĕ акма майсем тупаймастпăр. Е тата выльăх-чĕрлĕх отраслĕне васкаварлă аталантарассине илер. Сысна, сурăх-качака йышĕ ӳсрĕ республикăра. Майракаллă шултра выльăхсемпе лару-тăрăва ку тĕлĕшпе йĕркелесе çитерейместпĕр-ха. Ку тĕллевпе нумай вăхăтлăх паракан кредита илме республикипе пурĕ 29 проект тунă, 651 миллион тенкĕлĕх.

– Малтанхи мелсемпе ĕçлесе, эпир малалла каяймастпăр, – терĕ Михаил Васильевич. – Выльăх-чĕрлĕх фермисене реконструкцилесе, çĕнĕ технологи çине куçмалла, вĕсенче ĕçлекенсен уйăхри вăтам ĕç укçи 10-15 пин тенкĕрен кая пулмалла мар. Акă, мĕнле тĕллев пуç пулса тăрать çак ĕçре. Çĕнĕлле ĕçлеме шикленсе тăмалла мар.

Выльăх-чĕрлĕх сферинче çĕнĕ технологи çине куçни вара çапла майпа кадрсен ыйтăвне татса пама пулăшать. Ялти специалистсене кĕске вăхăтра çурт-йĕрпе тивĕçтермелли меле те палăртнă паян. Заявлени çырса панă кунран пуçласа, алла çурт-хваттер уççине иличчен 2,5 уйăх иртет. Енчен те çурт 1 миллион тенкĕ тăрсан, 600 пинĕ çамрăк специалиста – парне вырăннех.

Асăрхарăр пулĕ, наци проекчĕпе пурнăçа кĕрекен пĕтĕм ырă улшăну ял çынни валли. Ял хуçалăх министрĕ А.В. Гордеев палăртнă тăрăх, "АПК аталантарасси" наци проектне пурнăçа кĕртессипе Чăваш Республики лайăх енĕпе палăрать. Экономикăпа политика вара пĕр-пĕринпе çыхăнни – пурнăç чăнлăхĕ. Çавăнпа та çӳлерех асăннă цифрăсем çитес çул татах та пысăкрах пуласси, хамăрăн пурнăç шайĕ татах та ӳсесси йăлтах хамăртан килет. Хамăр епле ĕçленинчен, кампа пĕр шухăшлă пулнинчен, хамăр епле çула суйланинчен. Çавăнпа та тĕрĕс пĕтĕмлетӳ туса тĕрĕс утăм туни кирлех.

**Л. ПАВЛОВА.**

---

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Чăваш Республикинче çĕр участокĕсене патшалăх кадастрне шута илес тата куçми пурлăх объекчĕсене патшалăх енчен шута илес ĕçе вĕçлес енĕпе пурнăçламалли хушма мерăсем çинчен

Граждансен харпăрлăх прависене гарантилес, рынок хутшăнăвĕсене малалла аталантарас тата Чăваш Республикин инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес тĕллевпе çапла йышăнатăп:

1. Пĕр-пĕтĕм автоматизациленĕ тытăм никĕсĕ çинче Чăваш Республикинче çĕр участокĕсене патшалăх кадастрне шута илес тата куçми пурлăх объекчĕсене патшалăх енчен шута илес ĕçе вĕçлесси тата çав тытăма куçми пурлăхăн пур объекчĕсем çинчен пĕлтернине 2008 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен кĕртесси чи малта тăракан задача тесе шутлас.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн: Федерацин куçми пурлăх объекчĕсен кадастрĕн агенствин Чăваш Республикинчи управленийĕпе пĕрле, аэрофотосьемка материалĕсемпе усă курса, Чăваш Республикин халăх пурăнакан вырăнсен тата ялсен хушшинчи территорисен çĕрĕсене инвентаризацилес енĕпе ĕçсем йĕркелемелле тата 2008 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕр харпăрлăхне уйăрас тата çĕр касас ĕçе вĕçлемелле, кашни çĕр участокне кадастр номерĕ парса тухмалла;

республикăн "Чăваш Республикинче 2003-2007 çулсенче патшалăх çĕр кадастрне тытса пымалли тата куçми пурлăх объекчĕсене патшалăх енчен шута илмелли автоматизациленĕ тытăм туса хурасси" тĕллевлĕ программине çак Указа пурнăçлама кирлĕ пайра улшăнусем кĕртмелле;

Федерацин Куçми пурлăх объекчĕсен кадастрĕн агенствипе Чăваш Республикинче куçми пурлăх кадастрĕн тытăмне туса хумалли ĕçсем валли укçа-тенкĕ уйăрасси çинчен хушма килĕшӳ хатĕрлемелле, Чăваш Республикин 2007 çулхи республика бюджечĕн укçи-тенки шучĕпе пĕрле укçа-тенкĕ уйăрма пăхса хăвармалла;

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе çак ĕç-хĕл валли укçа-тенкĕ пĕрле уйăрса централизациленĕ йĕркепе поселенисен генеральнăй планĕсене йĕркелемелле;

çĕрсен патшалăх кадастр хаклавĕн кăтартăвĕсен пахалăхне кăтартас енĕпе сĕнӳсем хатĕрлес ĕçе хăвăртлатмалла;

Федерацин "Граждансен куçми пурлăхăн хăш-пĕр объекчĕсем тĕлĕшпе прависене çăмăллатнă йĕркепе çырса йĕркелес ыйтупа çыхăннă Раççей Федерацийĕн хăш-пĕр саккунсен акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен" 2006 çулхи çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 93-ФЗ №-лĕ саккунне пурнăçлас тĕллевпе:

хушма хуçалăха, дача хуçалăхне, пахча-çимĕç, сад ĕçне, уйрăм гараж е уйрăм пурăнмалли çурт-йĕр тăвас ĕçе тытса пыма усă куракан çĕр участокĕсем тĕлĕшпе территори çĕр йĕркелĕвне ирттерес енĕпе пурнăçлакан ĕçсемшĕн илекен чи пысăк хаксене (тарифсене, хаксене, ставкăсене) 2010 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕччен хи тапхăра палăртамлла;

тĕрлĕ тĕллевпе усă куракан тата усă курма ирĕк панă çĕрсем валли çĕр участокĕн лаптăкĕн чи пĕчĕк виçине палăртмалла, çĕр касса пани çинчен калакан документсенчи çĕр участокĕн лаптăкĕ çав çĕр участокĕн правине палăртакан документсенчи çĕр участокĕн лаптăкĕнчен пысăкрах пулма пултараймасть;

вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене граждансен куçми пурлăхăн хăш-пĕр объекчĕсем тĕлĕшпе прависене патшалăх регистрацийĕ тăвас ĕçе "пĕр кантăк" принципĕпе йĕркелеме методика тата практика пулăшăвĕ памалла, граждансем валли çăмăллатнă йĕркепе куçми пурлăх правине çырса йĕркелесси çинчен калакан тĕслĕх документ хатĕрлемелле.

3. Муниципалитет пĕрлĕхĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене сĕнес:

тивĕçлĕ территорисен çĕр йĕркелĕвне, инвентаризацие вĕçлес, шута илмен çĕр участокĕсене тата куçми пурлăх объекчĕсене тупса палăртас, уйăрас енĕпе активлă мерăсем йышăнмалла тата 2007 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен çĕрсене кадастр шута илессине, техника инвентаризацине тата тивĕçлĕ муниципалитет пĕрлĕхĕсен территорийĕсенче куçми пурлăх объекчĕсене патшалăх техника шута илессине вĕçлемелле;

куçми пурлăхăн хăш-пĕр объекчĕсен тĕлĕшпе граждансен прависене çăмăллатнă йĕркепе çырса йĕркелес ыйтупа ăнлантару ĕçĕ туса ирттермелле;

граждансен интересĕсене тĕпе хурса çĕр участокĕсене патшалăх кадастрне шута илме, çав çĕрсем çинче туса лартнă куçми пурлăх объкчĕсене техника енчен шута илме (инвентаризацилеме) кирлĕ ĕçсене пурнăçлама тата документсем хатĕрлеме заявленисем е шантару хучĕсем илессине "пĕр кантăк" принципĕпе йĕркелемелле, граждансен прависене тата (е) ытти докуменчĕсене патшалăх регистрацийĕ туни çинчен свидетельство памалла;

вырăнти бюджетсенче граждансене куçми пурлăха патшалăх регистрацийĕ тума паракан шантару хутне нотариус çирĕплетнипе пулакан пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме укçа-тенкĕ пăхса хăвармалла;

çĕр парасси çинчен калакан йышăнусенче уйрăм çын тата юридици сăпачĕсене панă çĕрсем çинче туса лартнă куçми пурлăх объекчĕсене палăртнă сроксенче регистрацилес енĕпе тивĕçсене пурнăçламалли условисем пăхса хăвармалла.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2006, юпа, 3, 80 №.

---

# Указа ăнлантарса пани

Хальхи вăхăтра Чăваш Енре паянхи информаци технологийĕсемпе усă курса çĕр тата куçман пурлăх çинчен калакан кăтартусен патшалăх базин пĕрлехи тытăмне йĕркелес ĕç пырать. Çакăнпа пĕрлех патшалăх регистрацийĕ туман тата лаптăка чикĕлемен çĕрсене, куçман пурлăха инвентаризацилеççĕ. Çĕрсене кадастр хаклавĕ парассине ирттернĕ. Çĕр лаптăкĕн правине халĕ хуçалăх кĕнекинчен çырса илнин е маларах панă документсен, çак правăна палăртаканскерсен е ĕнентерекенскерсен никĕсĕ çинче регистрацилеме юрать.

Çапах та туса ирттернĕ ĕçсем тухса тăнă хăш-пĕр ыйтăва татса пама çителĕклех май памаççĕ. Граждансен çĕр лаптăкĕпе çыхăннă прависене патшалăх регистраци тума лаптăка чикĕлемелле тата кадастр учетне кĕртмелле. Республика территорийĕнче патшалăх шута илмен хуçасăр çĕрсем пайтах-ха. Куçман пурлăхăн çĕнĕ объекчĕсене чылай чухне палăртнă срокра регистрацилемеççĕ. Çавăнпа та çĕре сутнă е туяннă тата çĕрпе çыхăннă ытти ĕçе пурнăçланă чухне кадастр учечĕ пулманран, çĕре рынок хакĕпе хакламанран унпа спекуляци тăвасси е ултав тĕслĕхĕ час-часах тĕл пулать. Йĕркеллех мар çак лару-тăру граждансен тата пĕтĕмĕшле обществăн прависене реализацилес гарантийĕсене вăйсăрлатаççĕ.

Çакна та шута илмелле: çĕрĕн чăн хакне çĕр хутшăнăвĕсене, экономикăпа тата ытти сферăпа çыхăннă факторсене тишкерсе çеç палăртма пулать. Çавăнпах патшалăх çĕр кадастр хаклавĕн кăтартăвĕсемпе çыхăннă ыйтăсене татса пани пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн "Чăваш Республикинче çĕр лаптăкĕсене патшалăх кадастрне шута илес тата куçми пурлăх объекчĕсене патшалăх енчен шута илес енĕпе пурнăçламалли хушма мерăсем çинчен" Указĕнче çĕр йĕркелӳпе çыхăннă ĕçсене хăвăртлатма палăртнă. Аэрофотоӳкерӳ материалĕсеме усă курса çĕрсене инвентаризацилессне кĕске вăхăтра вĕçлемелле. Çакăнпа пĕрлех уйсенчи ĕçсене пурнăçламалла, çĕрсем ăçта вырнаçнине, вĕсен тĕллевне тата право лару-тăрăвне, çĕр лаптăкĕсем çинче куçми пурлăх объекчĕсем пуррине палăртмалла. 2008 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен çĕрсене чикĕлессине вĕçлемелле, кашни лаптăка кадастр номерĕ памалла.

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕнче палăртнă мерĕсене пурнăçа кĕртни çĕрсемпе тата куçми пурлăх объекчĕсемпе усă курассин тухăçлăхне ӳстерме, Чăваш Енĕн тата республикăри хуласемпе районсен инвестици илĕртӳлĕхне, граждансен тата мĕн пур шайри бюджетсен тупăшне пысăклатма пулăшĕ.

**Н. СМИРНОВ,**
**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ – Чăваш Республикин финанс министрĕ.**